2014 • 7 №

АКА – АПРЕЛЬ

# КАПКĂН

ХЫПАР

16+




С.Мягков ӳкерчӗкӗ

**КАПКĂН**

**Сатирăпа кулăш журналĕ**
**1925 çулхи пуш уйăхĕн**
**16-мĕшĕнче тухма пуçланă**
**7 (1601)№**
**ака (апрель)**

Учредительсем – Чăваш Республикин информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви, «Хыпар» Издательство çуртĕ

**Директор-тĕп редактор**
**А.П. Леонтьев**

Редактор –
Н.П. Петров

Художник –
С.Б.Мягков

Калăплавçă –
Е.А.Трофимова

Журнала почта уйрăмĕсенче, «Чăваш пичет» тата «Советская Чувашия» киоскĕсенче, редакцире çулталăкĕпех çырăнтараççĕ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00308 номерпе регистрациленĕ.

**Индекс – 24608**

Пичете алă пуснă: 2.04.2014
Пичетленĕ: 8.04.2014
Хут формачĕ 60х84/8
Усл.п.л. 1,5
Тираж 2278 экз.
Заказ К-604



Ыйтмалли телефонсем:
56-09-31, 56-00-67, 62-50-06.
Редакци адресĕ:
428019, Шупашкар хули,
Иван Яковлев пр., 13.
факс: (8352) 62-50-06, 28-83-70

www.hypar.ru
e-mail: atal-volga@mail.ru



Журнала «Хыпар» Издательство çуртĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ.



Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, тавăрса памаççĕ. Журналăн юрăхсăр экземплярĕсем тĕл пулсан издательство типографине пĕлтермелле.
Кунти материалсене «Капкăнран» илнине асăнмасăр тепĕр хут усă курма юрамасть.





**– Тинех тăвансем пуçтарăнчĕç.**

– Наконец-то родственники собрались.

С. Мягков ӳкерчĕкĕ.

## Çиле хирĕç сас-хура

• Пенси фончĕ граждансен кун-çулне тăсмалли указ проектне хатĕрлеме пуçланă.

• Профсоюз пĕрлешĕвĕ çул çинчи пăкăсенче çухатнă вăхăта пĕтĕмĕшле ĕç стажне кĕртме сĕнет.

• Чăваш чĕлхин грамматикине кирлĕ пек йĕркелейменнине кура ăслăлăх канашĕн ĕçне шкул ачисем хăйсен çине илнĕ.

• Ĕç-пуç çивĕчленнĕрен хăрушсăрлăх тытăмĕн йĕрлевçисене проводник ĕçне тĕпчеме хушнă. Лешĕ пассажирсене вакунра вăрттăн чей сутнă имĕш.

• «Луноходпа» çул-йĕр правилисене пăсса çӳренĕшĕн суд приставĕсем космонавтсене штрафланă.

• «Тормоз çук!» – пĕлтернĕ пассажирсене троллейбус водителĕ, аллине «сникерс» тытнăскер.

• Пĕр хурах арçынран хĕрарăм пулса тăнă та тĕрмене çакланасран çăлăннă. Анчах йĕркелĕх хуралçисем ăна амăшĕн капиталне илнĕ чухне пур пĕрех ярса илнĕ.



## Ирех вăранать

– Кун каçа çавăн чухлĕ йăнăш тума мĕнле «ăс çитеретĕн» эсĕ? – тесе ыйтаççĕ пĕринчен.

– Ара, эпĕ ирех тăратăп-иç, – ним туман пекех хуравлать лешĕ.

## Виçĕ тапхăр

Мунчакасра икĕ арçын калаçса лараççĕ.

– Хĕрарăм пурнăçĕ виçĕ тапхăртан тăрать тени мĕне пĕлтернине тин ăнланса илтĕм, – тет пĕри.

– Хăш тапхăрсем çинчен юмахлатăн çак эсĕ? – ыйтать тусĕ.

– Ача чухне вăл ашшĕне тарăхтарса пурăнать, каччă кайсан – упăшкин «чунне илет», ватăлсан – кĕрӳшне вăрçса пурăнать, – ăнлантарать лешĕ.




– А ты его знаешь?
– Первый раз вижу!



## Пăрахас...

– Эрех-сăра çын сывлăхĕшĕн сиенлĕ пулни пирки вулатăп та татăклă сăмах калас килет!

– Мĕнле сăмах-ши?

– «Çитет!» тесшĕн эпĕ. Çитет, кунашкал кĕнекесене текех... вулама пăрахас тетĕп...

## Тинех килеççĕ

Тăрна Мишши лотерейăпа пысăк укçа выляса илнĕ. Хаçат ĕçченĕсем унран интервью илме пынă.

– Мĕн калас – маншăн ку икĕ хут телей пек туйăнать.

– Мĕншĕн çапла шухăшлатăн?

– Хăвăрах курăр: ыранах ывăл, хĕр, мăнуксем персе çитĕç – вĕсене курманни пилĕк-ултă çул ĕнтĕ.

**Г. ФЕДОТОВ**

# Пирĕн урам анаталла

Ялти хуньăма кĕтме хула çум вокзалне тухрăм. Тавах, автобусĕ вăхăтра çитрĕ. Çул урлă каçсан троллейбус чарăнакан çĕре кăштăртатрăмăр. Тăратпăр çапла, 5-мĕш маршрутпа çÿрекенни курăнмарĕ-ха.

–5-мĕш троллейбус чи хисепсĕрри сирĕн, – ун-кун пăхкаласа мăкăртатать хуньăм. – Иртнинче çур сехет ташларăм çакăнта. Вăт, Шупашкарта пурăннипе мухтанатпăр. Транспорт чарăнăвĕн вырăнне те тĕрĕс çырма пĕлместĕр-çке. Ман куç тĕтреллĕ кăтартать-и е хутла вĕренменнисем çырса çапнă-и: «Хулаçум автовокзлĕ» тенине вуласан чĕлхе такăнчĕ.

Тем каламалла ĕнтĕ хуньăма. Кунтан кунĕпе пин-пин çын иртсе çÿрет, килен-каян йĕркесĕрлĕхе асăрхатех. Пирĕн чĕлхеçĕсем сăмахсене еплерех çырмалли пирки тавлашаççĕ, теприсем кивĕ орфографи патне таврăнма чĕнеççĕ. Йăлт арпаштарса ячĕç.

Вырăсларан чăвашла куçарнă тĕслĕхсенче ним уççи-хуппи çук. Тĕп хуламăр урамĕсемпе утса иртсен çав шăйрăксем куçа тирĕнеççех. Ав, «Трактăр тăвакансен проспекчĕ». Каçарăр та, иртнĕ ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенче, çыру йĕркисем çирĕпленнĕ тапхăрта, трактор сăмаха «ă» сас паллипе çыркаланă. Халь çав саманана таврăнтăмăр пулать.

Проспектпа «324-мĕш стрелоксен дивизи урамĕ» хĕресленет. Миçемĕш стрелоксем вĕсем? Асăннă çар чаçĕ хаяр вăрçă тапхăрĕнче чăваш хутлăхĕнче чăмăртаннине пĕлетпĕр, фашист эшкерне тустарнă ентешсем умĕнче намăс.

Павлов мичман та Раççей çар историйĕнче паллă йĕр хăварнине сума суса урама ун ятне пани паха. Шел, урам ятне кам мĕнле пĕлнĕ çапла кукăртса хуни пире пĕртте чыс тумасть.

Хула администрацийĕнче урамсен ячĕсемпе ĕçлекен ятарлă комисси пурмĕн. Ятсене тĕрĕс парассишĕн вĕсен пуçа хыçмалла пек. Чарăнусене йĕркене кĕртессишĕн яваплисем пурах пуль. Вокзал – хула хапхи-çке, çын умĕнче аван мар...

**Григорий СЛАВИН.**
**Авторăн сăн ÿкерчĕкĕсем**













**Йомăш çырнисем...** Ошибки не понарошку...

## Вута кĕме кирлĕ мар

Упăшкипе арăмĕ.

– Хăвна качча тухиччен эсĕ мана: «Саншăн вута кĕме хатĕр», – теттĕн. Ҫавна мантăн-им? – ыйтать арăмĕ.

– Пĕрле пурăнассишĕн мĕншĕн вута кĕмелле-ха? – тавăрать арҫын. – Урăххине куҫ хывран-им? Эпĕ вутран тухаймасан ăна киле кĕртесшĕн-тĕр...



## Сăлтавне тупнă

Карчăкпа старик.

– Карчăк, эсĕ юлашки вăхăтра тутлă яшка пĕҫерейми пултăн. Ватăлатăн пулас, – ўпкелешет старик.

– Ху ҫăвар тулли тимĕр шăл ларттартăн та – апат тути улшăнатех ĕнтĕ,– тавăрать лешĕ.



## Ĕҫсĕр лартмасть

– Эпĕ кукăль пĕҫересшĕн. Чунăм, диван ҫинче выртиччен кухня урайне шăлса тух-ха – кукăль тутлăрах пулĕ, – хушать арăмĕ упăшкине.

– Хама япăх туятăп-ха, алăсем чĕтреҫҫĕ, – тавăрать лешĕ.

– Апла пулсан халех кавир шаккама тух!



– Мама мыла раму.

## Сăра тесен

Упăшки киле ўсĕр таврăннăшăн арăмĕ кăмăлсăрланать.

– Ĕҫ хыҫҫăн эрех ĕҫмесĕр киле таврăн тесе миҫе хутчен каламалла сана, – тустарать хĕрарăм.

Упăшки хăнк та сикмест. Хĕрарăм ăна хăратса илме шутлать:

– Кунашкал пурнăҫ йăлăхтарчĕ. Ҫитет! Суйла: е эпĕ, е сăра?

– Сăри чылай-и? – пуҫне ялтах ҫĕклет арҫын.

## Ланкашкаллă ҫул шыракансем

Хĕрпе каччă уҫăлма тухнă. Ҫўресен-ҫўресен такси чараҫҫĕ те хыҫалти ларкăча вырнаҫаҫҫĕ.

– Ăҫта кайма хушатăр? – ыйтать шофер.

– Кирек ăҫта кайсан та ҫавах, – тет хĕрĕ.

– Ҫулĕ ланкашкаллă пултăр, – хушса хурать каччи.

## Тасатнă

Ир. Упăшкипе арăмĕ. Арҫын ĕҫе кайма хатĕрленет.

– Костюма тасатрăн-и? – ыйтать упăшки.

– И-и, ĕнерех тасатрăм... Кĕсйўнте вак укҫа ҫеҫ юлчĕ, – тавăрать лешĕ.

# ХУÇАСĂР ЙЫТĂ

Чистайра нумайранпа пулманччĕ. Килнĕ-килнех яра куна курса çӳрерĕм, пасарне те çитрĕм. Çук, япала-мĕн туянас шухăшăмпа мар, ахаль çеç.

Пĕр сехет хушшинче йăлтах курса çаврăнтăм. Кунта та, пирĕнни пекех, уйрăмлăхĕ темех çук.

Пасартан тухнă çĕрте пĕр ватă карчăк йытă сутса тăрать. Йытти сăрă, кашкăр тĕслĕ. Паллах, кил йытти, хапха айĕнчен вĕрекенни.

– Мĕнле йăхран сирĕн йыттăр? – юри ыйтатăп.

– Догнапер, – хуравларĕ карчăк.

Эпĕ вара, кил йыттисĕр пуçне, нимĕç овчарки тата бульдог тенисене çеç илтнĕ.

– Мĕн чул ыйтатăр?

– Хаклах мар. Илесех тесен, çуррине чакаратăп.

– Урисем ытла çинçешке, – тиркешнĕ пек пулатăп.

– И-и, çинçе туналли, хытăрах чупать.

– Ма вара вăл çав тери ырхан, чирлĕ мар пуль-çке?

– Çук, çук! Ырханнине чупма çăмăлтарах.

– Ячĕ пур-и унăн, мĕнле чĕнетĕр?

– Догнапер.

– Догнапер – унăн йăхĕ терĕр, эпĕ хăйĕн ятне ыйтатăп.

– Йăхне пĕлместĕп, унăн ячĕ çапла. Вырăсла. Догнать и перегнать тенине пĕлтерет. «Хăваласа çитес те иртсе каяс» тени пулать ĕнтĕ.

– Кама хăваласа çитсе иртсе каймалла вара унăн?

– Малтисене пурне те.

– ...Нумайăшне хыçне хăварчĕ-и?

– Хальлĕхе никама та хăваласа çитеймен-ха. Çамрăк чухне вăл питĕ хитреччĕ, ячĕ те килĕшетчĕ. Ăна Мускавра пысăк куравра кăтартнăччĕ.

– Ан тĕлĕнтерĕр.

– Нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Унта пулнă çынсенчен ыйт-ха, пуртех çирĕплетĕç... Анчах та каярахпа вăл унтан тарчĕ.

– Апла тăк вăл сирĕн мар?

– Паллах, манăн мар, хуçасăр вăл. Эпĕ ăна хĕрхенсе пăрахрăм та хам пата вăхăтлăха илештертĕм.

– Апла пулсан, ма сутатăр?

– Ара, ачам, мĕнпе тăрантарасха? Пенсийĕ хама та çитсе пыраймасть.

– Эсир ăна час-часах хĕнетĕр мар-и? Вăл ытла хăравçă курăнать, кусран пăхма та шикленет.

– Йăнăшатăр, çамрăк çыннăм. Хăравçă мар вăл, хăйĕнчен хăй вăтанать. Куратăр вĕт, йăптăхне те тăкса пĕтерейместь, мĕскĕн. Ну, мĕнле, илетĕр-и?

– Çук, илместĕп.

– Ил, ульăм, ил! Саншăн тесен татах чакаратăп. Ӳкĕнĕçлĕ пулмĕ, спаççипă калăн мана.

– Çук, мăнакка, илместĕп, – тетĕп те малалла утатăп.

Карчăк йыттине çавăтса ман хыçран васкать.

– Тăхта-ха, ульăм, тăхта. Атя ĕнтĕ сиенĕ хамах пултăр. Ил! Тата чакаратăп.

– Çук, мăнакка, апла та илместĕп, – тетĕп кăштах чарăнса.

– Укçуна ытлах хĕрхенетĕн пулсан, ахалех паратăп эппин.

– Ан ӳкĕтле, мăнакка, апла та кирлĕ мар. Йытăпа мĕн тăватăп-ха эпĕ?

– Каларăм-иç: сунара çӳреме те, кил хураллама та... Ачусемшĕн пĕр йăпанчăк пулать. Арăму хăвна часчасах вăрçаканни пулсан, малашне унăн çилли пĕтĕмпех йытта куçать.

– Çук, çук, мăнакка, текех ан калаç, арăмăм-парăмăм та, ача-пăчам та çук. Эпĕ пĕччен. Илместĕпех.

– Турăçăм! Мĕнле-ха капла? Ху питĕ ырă çын пек курăнатăн. Тархасшăн илсемччĕ, ме-ха, тыт кантрине. Çийĕнчен пĕр михĕ шăмă паратăп. Сахалран та пĕр эрнене çитет... Хĕрхенсем пĕрех хут!

– Тем пекехчĕ, мăнакка, – тетĕп малалла утса. – Анчах та ăнланăр: эпĕ урăх хуларан килнĕ çын, кунта çула май çеç чарăнтăм.

Ватă карчăка та, йыттине те шутсăр хĕрхентĕм.

**В. ОРЛОВ**





# Кителе варалас мар тесе

Çемен çар тивĕçне пурнăçласа тăван яла таврăнсан икĕ уйăх пурăнчĕ-ши – унăн пурнăçĕнче тĕлĕнмелле мыскара сиксе тухрĕ. Тăван совхозра çурхи тыр-пула акса пĕтернĕпе пĕрех, хĕвел çаврăнăш вăрри акмалла. Миçе гектар акмаллине палăртса хуманччĕ, тăваттăмĕш уйрăмĕн пуçлăхĕ Раиса Васильевна хушнипе вунă гектар акас терĕç. Çĕрĕ хатĕр. Сигнал парсан Çеменпе Илюша вăрлăх патне склада кайрĕç. Тиенĕ чухне кительне варалас мар тесе Çемен ăна стена çинчи пăтаран çакса хучĕ. Тарасапа виçрĕç, кайран автомашина çине тиесе хире кайса пушатрĕç. Икĕ хутчен складран хире автомашинăпа хутларĕç.

Çанталăк лайăх, кайăксем юрлаççĕ кăна. Ăшă çил вĕрет. Виççĕмĕш хут таврăнсан Çемен кительне илес тесе склада пычĕ – кладовщица хупса кайнă.

Каçхи вăййа тухма та вăхăт. Илюша тĕл пулсан сыпмалли тупăнчĕ. Тепĕр кун Çемен çывăрса тăманччĕ, ăна милиционерсем вăратрĕç. Машинăпа лартса склад патне кайрĕç. Кунта совхоз пуçлăхĕ, кладовщица, уй-хир бригадин уйрăмĕн пуçлăхĕ Раиса Васильевна, Илюш тăраççĕ.

Çакă палăрчĕ. Çĕрле такам склада çаратнă. Çемене хĕвел çаврăнăш вăрланă тесе айăпларĕç, машинăпа лартса кайрĕç. Тепĕр кунран Çемен таврăнчĕ. Пĕр уйăх иртсен суд пулчĕ. Çемене условнăй майпа икĕ çуллăха ирĕксĕр хăварчĕ. Хĕвел çаврăнăш вăррин хакне тӳлемелле турĕç.

Çемен кительне варалас мар тесе хывса склад стени çинчи пăта çине çакса йăнăш турĕ. Çитменнине – китель кĕсйинче унăн паспорчĕ пулнă. Кăштах вăхăт иртсен, самана ăлплансан хĕвел çаврăнăшне чăн-чăн вăрланисем сутса укçа турĕç (вăл вăхăтра хула урамĕсенче хĕвел çаврăнăш вăррине стаканпа сутатчĕç). Çемен хăйне камсем шар кăтартнине пĕлчĕ, шарламарĕ: «Турă суд тутăр», – терĕ.

**А.ВИШНЕВСКИЙ**



**– Каçар, ылтăн пулă, карчăкăм валашка мар, кĕпе çумалли машина ыйтать.**

– Смилуйся, золотая рыбка, старуха просит стиральную машину, а не корыто.



**– ЖКХ пуçлăхĕ ку, çурт çи виттине мĕншĕн пăртан тасатмаллине вĕрентетпĕр.**

– Это наш начальник ЖКХа, будет знать, как сбивать сосульки!



**–Хăшĕ маларах?**

– Кто кого?

**Л. КАЗНАЧЕЕВ ӳкерчĕкĕсем**

Николай ИШЕНТЕЙ

# Сутăнчăк интеллигент, е Якăлти юрăç тава тивĕçлĕ ят шырани çинчен

**Юмахлатнă фельетон**

А.Плеханов ўкерчĕкĕсем

Пурăннă тет Упаел тăрăхĕнче япшар сăвăç Упаçук. Сăвă хыççăн сăвă шăрçаланă шурă хут çине çакскер. Ял-йышра ятуллă çўренĕ, пули-пулми пĕлĕше курсан пуç каçăртса иртнĕ. Ара, ятлă-сумлăскерĕн тĕрлĕ лăпăстипе калаçасах килмен-тĕр. Çырсан-çырсан хайхискерĕн чернил пĕтсе çитнĕ. «Сăвă çыраймасан ят-сум та иксĕлме пултарать-иç. Ай, мĕн тумалла-ши?» – шухăша ўкнĕ Упаçук.

Вăрманлă тăрăхра пурăнаканскер аптрасах ўкмен – асаттесен меслечĕпе чернил тупма шутланă. Кайнă вара вăрмана юман çăпанĕ пуçтарма. Мĕн шыранине тупнăха вăл, анчах таврăнма вăхăт çитсен киле каймалли çула тупайман. Хăш еннелле утмалла-ши тăван яла çитес тесен? Вăт япала! Сумлă сăвăç çĕтсе кайнă! Инкеке çанталăкĕ сивĕтнĕ. Тĕттĕмленнĕ. Ирччен ăçта çĕр каçмалла-ши?

Телей юнашарах иккен. Ывăннипе утайми пулнă сăвăçа Упа Утаман курнă та ăшă шăтăка çĕклесе кĕнĕ. Пылпа хăналанă, хăй çумне вырттарса ăшăтнă. Ирхине хăнана çул юппине çитиех ăсатса янă.

– Пĕр çулĕ – Упаелне, тепри Шур хулана çитерет, – ăнлантарнă Утаман. – Хăш çулĕпе каяссине ху пĕл.

Каччă упана чунтан тав тунă. Поэт – поэтах çав. Тем самантран сăвă шăрçаласа та хунă, тав сăмахĕ вырăнне:

– Каçхине тўпе хураччĕ,
Телей çĕтнĕ темелле.
Ырă сăн унта çуралчĕ
Шусăм килнĕ тĕлелле.

Упраясчĕ лайăхраххăн
Хамăрăн пĕрне-пĕри.
Çухалсан çулта хăраххăн
Ăшăтать упа чĕри.

Халал сăвви Упа Утамана питĕ килĕшнĕ.

– Тĕрĕс сăмахсем, – тенĕ вăл. – Уйрăмах сăввăн ячĕ: «Упапа чĕре» тени вырăнлă. Этем йăхĕпе Утаман таврашĕ яланах туслă пурăннă, пĕрне-пĕри йывăрлăхра пулăшнă. Малашне те çапла пурăнасчĕ.




Упапа сăвăç ăшшăн ыталашса уйрăлнă. Упаçук упа кăтартнă çулпа вăрман варринчи тĕттĕм яла мар, аслă шыв хĕрринчи Шур хулана çул тытнă. Кунта сăвă çырма чылай меллĕрех. Чернил пĕтсен пичетлемелли машинăпа усă курма пулать. Цивилизаци авмашки никама та пайсăр хăвармасть. Поэта çĕнĕлĕхсем, тĕрлĕ çыру хатĕрĕ парнелет. Ĕçле – ан ўркен. Анчах ырă пурнăç пултарулăха мăкатать иккен. Упаçукăн та çĕнĕ сăвă йĕркисем çуралми пулаççĕ.

Нумай пулнă-и, сахал-и, çулта-йĕрте Упаçук йăнкăл-янкăл çўрекен юрăçа тĕл пулнă. Ячĕ те кăсăклă – Якăшпи. Кăлт сикнĕ поэт чĕри. Илĕртмĕш хĕрĕн пуçне çавăрас тĕллевпе сăвă вулама пуçланă. Урăх сăвă тавраш çырăнманран лешнех – Утамана халалланинех – вулама пикеннĕ. Юлашки йĕркине çеç «Ăшăтать пике чĕри» сăмахсемпе ылмаштарнă.

Халал сăвви Якăшпие те питĕ килĕшнĕ.

– Тĕрĕс сăмахсем, – тенĕ вăл. – Уйрăмах сăввăн ячĕ, «Хĕрпе чĕре» тени вырăнлă. Этемлĕхĕн чи черчен çуррипе чи вăйлă çурри пĕр чăмăра пĕрлешсе тĕнчене тытса тăраççĕ. Пирĕн те иксĕмĕрĕн çапла пурăнасчĕ.

Ай, каçар, хисеплĕ вулаканăм! Упаçукпа Якăшпи ăçта тата мĕнле лару-тăрура паллашнине калама маннăçке эпĕ. Халех йăнăша тўрлететĕп, поэтпа юрăç тĕл пулăвĕ çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа паратăп.

Якăшпи юрăç ял-ял тăрăх çўресе хăйĕн якăлти юррисемпе халăха савăнтарма юратнă. Тепĕр тесен, халăх хĕпĕртени уншăн пĕлтерĕшлех пулман-ха. Хисеплĕ ят çĕнсе илес тĕллевпе гастрольтен-гастроле çўренĕ вăл.

Акă Якăшпи пĕр яла çитнĕ. Вăт тамаша! Концерт пуçланнă-пуçланман залра арăш-пирĕш самана тапраннă. Куракансен кăмăлĕ икке пайланнă: арçынсем сар çу пек ирĕлнĕ, хĕрарăмсем вара урăм-сурăм пăлханнă. Хитре тути-çăварне йўçеккĕн пăркаланă, хаклă туфлисене юрăç еннелле вăркăнтарнă. Ара, артистки çаппа-çарамас-иç – малта-хыçра мĕн пурри йăлтах курăнать. Юрри-ташши те курăмсăр... Курăмсăр çеç мар – хурăмсăр та. Бардель-эсрел клубĕнче, усал-тĕсел йышĕнче юрласа савăнмаллискер. Çук, халăх кăмăлне тивĕçтереймен артистка – хисеплĕ ят та илеймен. Якăлтатни пурнăçа ăнтараймасса халăх аван ăнланнă.

Намăс-симĕсе картмасăр юрăç тепĕр яла кĕрлеттерсе çитнĕ. Хальхинче вăл хăйĕн ĕç меслетне тĕппипех ылмаштарнă. Халăх умне хальччен çын мĕн курман-илтмен капăрлăхпа тухнă: шĕлтĕр-шĕлтĕр шĕлтĕрмеллĕ, ахах-мерчен çутлашкаллă... Хаклă кĕпи ылтăнăн-кĕмĕлĕн ялкăшнă, чĕнтĕрлĕ-мĕнтĕрлĕ арки шевле сарри салатнă,

хумлăн-хумлăн выляннă. Çĕнĕ мода ялтăрми куракансен куçне çиçĕм тивнĕн тăраннă. Анчах мĕн ку? Çынсем каллех икке пайланнă. Хальхинче хĕрарăмсем пылак пыл хыпнăн тутисене йăлкăштарнă, арçынсем вара кăмăлсăррăн пуç чиксе ларнă. Сăлтавĕ пур: мăшăра е чун савнине кунашкал хаклă тумпа тивĕçтересси чи кĕрнеклĕ арçынна та шиклентернĕ. Пайтах тар тăкма тивет кунашкал модăпа танлашма. Çĕрме пуян сиккипе сиккелеме, долларсемпе перкелешме ĕç халăхĕ пултараяс çук – унăн енчĕкĕ пĕрĕнчĕк. «Кам пуян, çавă çăвар карса лартăр ку концертра», – тенĕ имĕш куракансенчен чылайăшĕ. Зал пушанса юлнă. Артистка каллех хисеплĕ ят илеймен.

Якăшпи чакма шутламан-ха, намăс кĕпи тăхăнса виççĕмĕш яла çитнĕ. Концерт пуçланнă. Пĕсçи-каççине хĕвел шевлин йăлтăртаттарса юрăç халăх умне тухсан куракансем хĕвеле вупăр хыпса çăтнăн пăлханса ӳкнĕ. Якăлти «хĕвеле» пула чăн-чăн хĕвел тухмасан тĕнче пĕтет-иç! Кунта та ĕç ăнман. Вара ырми-канми сĕмсĕркке малалла атакăна кайнă: пĕрре – çеçенхире парăнтарма, унтан – сăртту тăрăхне. Юрри ăнмасан ташшине пултарнă. Ăнмана канлĕх çук тенешкел тата темиçе çĕре çитнĕ. Анчах ниçта та ĕç тухман, тава тивĕçлĕ ят илеймен. Ят-сумăн хӳри кĕске иккен.

Çӳресен-çӳресен Якăшпи Упаçук пурăнакан тăрăха гастроле çитнĕ. Шăпах çакăнта – Шурă хулара – куç хывнă тет поэт чун киленĕç пикене. Ку вăхăталла Упаçук поэт кăна мар – вырăнти влаç та... Çук, чаплă сăвăсем çырнăшăн мар, кримплен костюм тăхăнса, мăйне йăлтăркка галстук çыхса çӳренĕшĕн те тивĕçмен вăл çак чыса. Шукăль тум пуçлăх тенкелне илем кӳрсен-кӳмесен те япшар чĕлхи тăван-пĕтен пурнăçне ырă еннелле çавăрасса шаннă-тăр суйлавçăсем. Яка чĕлхе якатнăран влаç картлашкипе çĕкленме пултарнă та вăл.

Концерт вăхăтĕнче якăлти пикен йĕкĕр улма пек кăкăрĕ, хĕвел хĕлхемĕ пек урисем Упаçука ăнран янă. Хайхи-майхи çак пуçлăх концерт вĕçленичченех явапллă хушу çине алă пуснă: «Якăшпи юрăçа «Тава тивĕçлĕ артист» хисеплă ят парас».

Сăмаха вĕçлеме те вăхăт. Юрăçăн та, Упаçукăн та ĕмĕчĕсем тулчĕç. Ĕнтĕ çак сăлтавпа банкет ирттермелле те – пурăнччăр савăнса. Шăпах банкетра ĕç-пуç пачах тепĕр май çаврăннă тет. Намăс-симĕссĕр пике пуç çавăрнăран япшар пуçлăх этем сĕмне çухатнă имĕш. Çакăн пирки темиçе сăмах.

Савнийĕ хисеплĕ ят илнишĕн саваннăскер, Упаçук пысăк ĕçкĕ тума шутланă. Кăвайт çинче шашлăк ăшаласах. Çав сăлтавпа вăрмана пăшал çĕклесе кайнă та сунартан тупăшпа таврăннă – упа какайĕпе. Çук, Упаçук пирки ытла усал ан шутлăрах: вăл хăйне инкекре çăлнă упанне мар, пачах урăххинне – Утаман куккăшĕнне, эпир пĕлмен упанне – тирне сӳнĕ.

Пуç тавра çавăрсах шутласан Упаçука хĕрхенес килет. Шел йĕкĕте, поэт пулма пăрахнă-пăрахманах чуниллине тухма ĕлкĕрнĕ. Таса вырăна усал ересси часах çав. Утаманпа ыталашса уйрăлнине, «этем йăхĕпе Утаман тавраш ĕланах туслă пурăнăпăр» тенине пуçĕпех маннă апăрша.

Банкет пуçланнă. Сулатник пек пĕчĕк чунлă чиновник чартак пек чанккама кĕленче пăккине çапса уçнă та черкке çĕклесе хĕрӳллĕ сăмах калама хатĕрленнĕ. Анчах тем амакĕ чăрмантарнă. Эрехне тута патне çитеричченех Упаçук пырне техĕмлĕ аш турамĕ вырăнне йĕплĕ чăмакка тăраннă. Банкета пухăннисем çакна сисмен-ха. Çапах та Чакак чакăлтатнине вун-вун хăлха илтнĕ:

– Инкек! Инкек! Упаçук, вăрман урлă вĕçнĕ чух пĕлтĕм хăрушла хыпар! Чăн-чăн Упа Утаман тухнă теççĕ шăтăкран. Хĕлĕпе выçса касăхнă, сана темшĕн тарăхнă. «Ăçта путсĕр сутăнчăк? Ăçта пилсĕр Упаçук? Ăна халех тупмалла! Хăйĕнне тирне сӳмелле!» – тесе кăшкăрашать тет. Ятлă-сумлă пуçлăхран ятсăр-сумсăр пуличчен час çухал... Час çухал! Чак-чак-чак!..

Упаçук Чакак чакăлтатнине итлесе пĕтермесĕрех вăрманалла тапса сикнĕ. Хăравçă мулкачла. Вăл алă пусса çирĕплетнĕ указ çеç сĕтел çине выртса юлнă. Анчах хаклă çак хут Якăшпие пулăшайман, халăх юратакан юрăçа тухайман вăл. Ун вырăнне «Малти-кайри якăлти» ят яланлăхах çыпçăннă. Мĕн тăвăн, халăх çăварĕн чару çук.

Хисеплĕ вулаканăм, ним иккĕленмелли те çук: Упаçук Утаманран тарса хăтăлатех. Упа тем пек вăйлă пулсан та çынна хирĕç вăрçăпа тухас çук. Тарăху сĕвĕрĕлсенех вăл хăйĕн ĕмĕрхи йăлине – Этем йăхĕпе Утаман тавраш килĕштерсе пурăнар тенине – аса илĕ те пурнăç каллех хăйĕн йĕркипе çаврăнма пуçлĕ. Анчах паянхи саманара курманçи-илтменçи пурăнма çук-çке. Тĕнче хĕррине пытарнă вăрттăнлăх та тĕнче умне вĕлт çеç сиксе тухма пултарать. Тĕлĕнмелли çук – вун-вун тĕрлĕ инçе курăм е вăрттăн-кĕрттĕн видеорегистратор ку чухне кашни кĕтесрех пур! Кирлех пулсан курман-илтмен хыпара та спутник эфирĕ мăйăр катнăн шĕкĕлчесе парать.

Упаçук поэтăн халал сăввине тĕнче умне кăларакансем те самантрах тупăннă. Ăна çыраканĕ Упаçук мар, пачах урăх поэт – ăсталăхĕпе пултарулăх тӳпине çĕкленнĕскер имĕш. Упаçук çак сăвăçăн вилĕмсĕр йĕркисене вăрланă тет. Ак япала! Поэт çывăх тусне Утамана çеç мар, чуна çывăх пикене кăна та мар – поэзи туррине пуçĕпех сутнă иккен! Ку вăрттăн хыпара спутник эфирĕ урлă, çичĕ çăлтăр ярăмĕнчи паллă тĕпчевçĕ çирĕплетсе каланă имĕш.

Упаçук халĕ те Утаманран пăрăнса çӳрет тет. Анчах упаран тарсан-тармасан та халăхран ниепле те пытанаймăн. Шурă хула çыннисем Упаçука вырăна лартаççех. «Вăл текех пирĕн пуçлăх мар. Эпир ятлă сумлă çынна пуçлăх ĕçне шанса панăччĕ. Ку вара çын мар – сутăнчăк интеллигент! Чунилли! Çук текех эпир шаннă Упаçук! Çук пирĕн йышра курман-илтмен ăçтисçук!» – çапла сăмах сарăлнă тет таврари ял-хулара.





## Кулăш кунĕнче усă курмалли сĕнÿ

***Шÿт тунă чухне пĕлĕшсене пăтăрмах тăвасран асăрханăр. Вулакана усă курма тĕслĕх сĕнÿ паратпăр: «Ай! Санăн пушмак çакки саланнă!» Кунашкал кулăш никама та нихăш енчен те сиен кÿрес çук. «Капкăн» журнал та çавах – хăйĕн вулаканне ялан ырă сунать, кăмăла çĕклекен хайлавсем сĕнет.***

***Çапах та чылай чухне çынсем пĕлĕшĕсене шарт сиктерекен шÿтсемпе те усă куркалаççĕ. Вăл шутра – ют çĕр-шывсенче пурăнакансем те.***

## Хăйĕн ятне ĕмĕрлĕхе упрас текенсем валли

Берлинта тухса тăракан пĕр хаçатра шÿтле-пÿтле пĕлтерÿ çаптарнă. Хула влаçĕ хăйĕн бюджетне пуянлатас тĕллевпе мĕн пур вокзалпа станцин ячĕсене сутма пуçланă имĕш. Кам та кам вăл е ку станцие е вокзала хăйĕн ятне парас тет хула бюджетне укçа куçармалла. Ытларах тÿлекенсем çĕнтереççĕ. Аукционта çĕнтерекенсен ячĕ те хула историйĕнче юлĕ.

## Маларах ĕлкĕрнĕ

Ку ĕç Америкăра кулăш кунĕнче пулнă. «Телеканалпа çапла пĕлтерÿ панă: «Малашне америкăри лавккасенче пирус сутма чараççĕ. Полицейскисене сентресем çинче выртакан пирус пачкисене те пуçтарса илме хушнă». Çак пĕлтерĕве пин-пин çын ĕненнĕ, полицейскисенчен маларах ĕлкĕрес тĕллевпе пирус туянма лавккасене васканă.

## Пароди ăстисенчен тăрăхлакансем те пур

Британире кулăш кунĕнче, нумай тиражлă хаçатра, интереслĕ статья пичетленнĕ. Унта çырнине ĕненес пулсан малашне эстрадăра пароди жанрĕпе тĕрлĕ камит кăтартма чараççĕ имĕш. Мĕншĕн тесен пародипе усă курни автор правине пăсниех. Çакна пĕлсен пародистсен пысăк ушкăнĕ правительство çурчĕ умне пухăнма калаçса татăлнă тет. Хирĕçле акци ирттерме.

## Чее реклама

Америкăри пĕр фермер вырăнта тухса тăракан хаçатра пĕлтерÿ панă: «Эпĕ тин уçăлнă хупахра сулахай алăллисене валли ятарлă черкке сутма пуçларăм. Кам та кам çав черккене туянасшăн, халех хупаха çитме васкăр. Ĕлкĕреймесен кăсăклă тавара сылтăм алăллисем туянса пĕтерĕç».

Нумай вăхăт иртнĕ-и, сахал-и – хупаха çынсем кĕпĕрленсе тулнă. Черккине çеç мар, эрехне те йăлтах туяннă.





# ÇУТĂ ПАРНЕ

Хĕлимун хулара хваттер илнĕ ятпа çĕн пӳрт ĕçки тума шухăшларĕ. Тăванĕсене, ĕçри юлташĕсене, тус-тантăшне, кӳршисене пурне те тенĕ пекех хăнана чĕнчĕ. Кун пек паллă уява никам та пуш алăпа пырас çук-ха. Çавна туйса-пĕлсех ĕнтĕ арăмĕпе иккĕшĕ çĕнĕ сĕтел-пукан туянса укçа-тенкĕ пĕтермерĕç. «Пирĕн ĕçки-çики – вĕсен япали-мĕнĕ», – терĕç те хăна-вĕрле кĕтме пуçларĕç.

Çĕнĕ хваттершĕн ниçта кайса кĕрейми савăннă Хĕлимун пӳлĕмсене кĕре-кĕре тухать, аптранипе пукан çине ларса пӳрне хуçса шутлама тытăнать:

– Хуняма сивĕтмĕш илсе паратăп тенĕччĕ-ха. Кум пĕр кун çаврака сĕтеле тиркерĕ – тăваткалли пулать. Хăйматлăх çемçе пукан çинче ларма юрататъ, эппин мĕн парнелесси паллă. Кукка хăй килес-тăвас чухне çывăрма тесех диван хатĕрлес пек калаçатчĕ. Юлташсем эртелпе шифоньер туянаймаççĕ-и? Ĕçрисем, тем тесен те, кĕнеке шкафĕпе çитмелле. Сервант вырăнне виççе пăхаканни камччĕ-ха вăл? Аха, пултăрăм. Çакăнта лартăпăр ун парнине... Карчăк, итле-ха? Иртнинче йăмăку тĕкĕр шыратчĕ. Трюмо туянать ĕнтĕ. Ыттисен япалисене ăçта вырнаçтарăпăр-ши тата? Лаххан Михали пек пасара кайса сутма тивет пуль.

– Ан ухмахлан-ха, Хилька, парнене кам суттăр, – кухньăран сас парать арăмĕ. – Çуралман тиха пилĕкне хуçса ларан çав, пулăшасчĕ апат хатĕрлеме.

Арăмне симĕс сухан тураса пама ĕлкĕрчĕ çеç, шăнкăрав шартах сиктерчĕ. Пысăк япала кĕтекен Хĕлимун йăтса кĕме çăмăлрах пултăр тесе яриех уçрĕ алăка. Тул енче хунямăшĕ яланхи пекех тутине сулахай еннелле чалăштарса кулса тăрать. Аллинче – хутран тунă курупка.

– Ой, кĕрӳçĕм, – тет вăл, – хам сăмаха тытайманшăн каçарах ĕнтĕ. Сивĕтмĕш сивĕтекен япала та, çавăнпа ăна туянмарăм. Ара, юратнă кĕрӳ-çке эсĕ манăн. Тытха, урăх япала илтĕм.

Хĕлимун курупкана салтса уçнă вăхăтра хунямăшĕ хăйĕннех малалла тăсрĕ:

– Ара, пур енĕпе те юрас тетĕпçке сана, кĕрӳ. Аран-аран суйласа илме пĕлтĕм. Ас тусах кайрăм эс пилĕкпе аптранине. Кварц лампипе хĕртĕнсе сывалтăр терĕм-çке сана, юратнă кĕрӳçĕм. Ăшă парне ку – çутă парне...

Хĕлимун савăнма та, кулянма та пĕлмерĕ. Арăмĕ хыттăн калаçнине илтсен тин тăн пырса кĕчĕ ăна, вара хунямăшне сĕтел хушшине кĕртсе лартрĕ.

Шăнкăрав кĕвви Хĕлимуна каллех алăк патне чĕнчĕ. Хăйматлăхсем персе çитрĕç. Иккĕшĕ те шалча пек япала тытса тăраççĕ.

– Çемçе пуканне ку таранччен хăвăрах илнĕ пуль, – сăмахларĕ хăйматлăх алă парса, – унпа тĕлĕнтерес çук, туянас тăк туянас асăнмалăх япала, терĕ карчăк та. Акă, торшер. Ячĕ те хамăран мар, французла çуткăç. Ну-ка, вырнаçтарса лартар-ха, çутăлтарар çак çут кун ячĕпе...

Хăйматлăхĕпе Хĕлимун торшера кĕтессе лартрĕç. Хăйсенчен çӳллĕскер маччана кăштах перĕнмест.

– Вăт, кĕрӳ, – ăнлантарчĕ хăйматлăх, – çĕрле вăрансан çутă çутма аякка каймастăн, аллупа е урупа çаклататăн та çак çипрен – пуç тăрринче ялкăшса та каять. Тавсье, хваттерӳ çутă пултăр, пурнăçу тутă пултăр.

Татах нумай калаçатчĕ пуль çаксĕр, арăмĕ Хĕлимуна куккусем килчĕç тесеваскатса илсе тухса кайрĕ.

– Тăхта-ха эс алла чăмăртама, ме, тыт, парнене, – хут курупка сĕнет куккăшĕ. – Хальччен диван туяннă пуль терĕ те инкӳ, эп те унпа килĕшрĕм. Çутăрах парнепе килес терĕмĕр. Çакăнта, хăвăр çывăракан тĕле, пуç тăрне, çакса ярăпăр-и? Куçна уçнă-уçман туртатăн та кантринчен, çутă çутăлса та каять. Çутă хваттершĕн, апла. Сывлăха пултăр.

Алăк патĕнче шав илтĕнчĕ. Юлташĕсем кĕпĕртетсе тăраççĕ.

– Нумай ларма вăхăт çук, васкатпăр, – хыпалантарать Илле текенни, – йышăн та парнене, ĕçтер те пĕрер курка, эпир кайрăмăр. Хваттерĕ çутă пултăр тесе люстра туянтăмăр.

Пилĕк туратлă япалана кĕтессе лартрĕ те Хĕлимун юлташĕсене арăмĕсемсĕр килнĕшĕн ятларĕ, вăйпах сĕтел хушшине кĕртсе лартрĕ. Кĕрекере сăмахюмах тапранчĕ.

– Халь электрокамин модăра, – парнине уçса кăтартрĕ ĕçрен килнĕ юлташĕ. – Хваттер сивĕрех чухне арăмупа ларăр та юнашар тек юрату çинчен пăшăлтатăр. Камин çути вăл – шухăша тарăнлатакан çутă. Кăмăл çутишĕн, пурнăç çутишĕн ĕçĕпĕр апла, хаклă юлташсем!

Кĕреке сĕрлеме тытăнчĕ, хăнасем килсех тăчĕç. Арăмĕн йăмăкĕ те сумкинчен икĕ пĕчĕкрех хут курупка кăларчĕ.

(Вĕçĕ 12 стр.)

# ÇУТĂ ПАРНЕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 11 стр.)

– Йыснапа аппа, – чĕвĕлтетрĕ вăл, – сирĕн пурнăç çак хваттерте улăхри чечек пек хитре пултăр. Ак çак чечексем кăнтăрла та, каç та илемлĕ тĕспе çунччăр, сире савăнтарччăр.

Чӳрече икĕ енне пăта çапрĕç те светильниксене çакса ячĕç, «тин çурăлнă чечексем» кĕрен, шупка тĕспе ялкăшрĕç.

Хваттер тулсах пычĕ, кавар тунă пекех çинеçине торшер, темĕн тĕслĕ светильник тыттарaççĕ Хĕлимуна. Пӳлĕмĕн пĕр кĕтесĕ халь магазинти электричество таварĕсем сутакан уйрăма аса илтерет.

«Хваттерĕ çутă пултăр», – илтĕнет пĕрмаях.

Сасартăк пăч сӳнчĕ çутă. Аптранипе шăрпăк чĕртеççĕ. Хăнасем чӳрече каррисене сирчĕç. Çав самантра алăка шаккани илтĕнчĕ. Хĕлимун унталла васкарĕ. Уçрĕ алăка – коридорта çап-çутă.

– Кĕме юрать-и? – илтĕнчĕ ашшĕн сасси. – Сывлăх сунатпăр пурне те!

Хĕлимунпа арăмĕ, хунямăшĕ, ытти тăванĕпе юлташĕсем кĕпĕрленсех кĕтсе илчĕç ялтан килнĕ хаклă хăнасене. Ашшĕн аллинчи тăвата кĕтеслĕ хунара илсе Хĕлимун сĕтел варрине лартрĕ. Хунар ăшĕнчи çурта çути пӳлĕме тĕксĕмрех çутăпа ачашларĕ, хуçăлнă кăмăла тӳрлетрĕ.

– Аçуна тăнлантарап та çав, – хыпăна-хыпăна калаçать амăшĕ, – мĕн тăван çав кив хунарпа, тетĕп. Вăл хăйĕннех перет. Ара, çав хунар утмăлта тет-и, музее пама илтĕм, тет. Акă, халь, катăк пуртă та кирлĕ пулнă пек, хамăрах юрарĕ. Ялта та тепĕр чух сӳнсе ларать те çути, сирĕн те пулать иккен унашкалли... Хĕлимун, эс унта çамрăксене илсе тух-ха. Эпир машинăпах килнĕ, парнесĕр мар.

Кĕçех çутине те пачĕç. Хĕлимун юлташĕсем урама кĕпĕрленсе тухрĕç, ашшĕпе амăшĕн парнисене йăтма пуçларĕç: диван-кравать, буфет, шифоньер, тăваткал сĕтел, трюмо, çемçе пукан, вун ик кăшăллă сăра пички...

Арăмĕ Хĕлимуна вăрттăн чĕнсе илчĕ те сăмсине унăн хăлхинех чиксе пăшăлтатрĕ: «Пӳрне хуçлатса парне кĕтсе ларнă чух аçу-аннӳне аса та илмерĕн иçмасса. Вĕсем, кур-ха, манмаççĕ сана».

Хĕлимун пуçне усса ним калама пĕлмесĕр аптраса тăрать çап-çутă пӳлĕмре.

**В. КУЗЬМИН**



**– Кушака çĕнĕ хваттере малтан кĕртни – ырă пулăм.**

– Хорошая примета – пускать кошку первой в новую квартиру.



**– Çĕнĕ вырăна куçнă ятпа!**
**– Сире те!**
– С новосельем вас!
– И вас тоже!

# Пăрамунпа Хĕлимун

Юратнă тусĕ сарăмсăр вилнĕ хыççăн Çумак пичче чылай вăхăт пусăрăнчăк çўрерĕ: алли ĕç патне пымарĕ, апат анмарĕ. Чунĕнче пушă. Çывăхри вăрмана лапсака хўрепе пĕрле çўреме хăнăхнăран юлашки вăхăтра çула тухми те пулчĕ старик. Иккĕн иккĕнехчĕ çав... Хуçин кашни утăмне, хусканăвне тимлесе ăна сăмахсăр ăнланнă янавар халĕ те юнашар пек туйăнать.

Эх-эх-эх, кама чăрмантарчĕ-ши йăваш чун? Куç умĕнчех пурнăçран уйрăлчĕ-çке мĕскĕн... Урамран ўсĕр çын пек тайкаланса кĕчĕ те сулăнса кайрĕ, йăваланса йынăшрĕ, тапкаланчĕ. Пулăшу ыйтса темскер каласшăн сўрĕкленнĕ йĕпе куçĕпе Çумак çине вăйсăррăн пăхса илчĕ. Унтан... шăпланчĕ... Мĕнле хура чун наркăмăшĕ çунтарчĕ-ши айăпсăр "чĕлхесĕрĕн" ăш-чикне?

Пуçне усмарĕ ватă. Йытăсăр пурăнма хăнăхманскер ял вĕçĕнчи Микуç Мирунĕнчен хăй килĕштернĕ шур хырăмлă йытă çурине илсе килчĕ çуллахи пĕр кун. Пăрамун ятлă ула-чăла кушакĕ, хуçи çумĕнче сĕртĕнсе мăрлатаканскер, хăйĕн пек шурăллă-хураллă кĕрĕклĕ Хĕлимуна шăрт тăратмасăрах йышăнчĕ. Митраппан вилнĕ хыççăн вăл та тунсăхлать те...

Тăватă "урасем" пĕр-пĕрне хăвăрт хăнăхрĕç, туслашрĕç: пĕрле выляççĕ, ыталанса çывăраççĕ. Пăрамун сунарçăпа Хĕлимун хуралçă хаваслăн тапăлтатнине чун каниччен пăхса киленет кил хуçи. Лешсем йăлтти-ялтти сиккелесе пăлт-палт йăванса каяççĕ те вăшт! тăрса çавра çил пек çаврăнаççĕ. Çăмăл та çаврăнăçуллă Пăрамун Хĕлимун урлă вĕлт! тăвать те куç хупса иличчен çывăхри лапсăркка йăмра çине чăкăр-чакăр хăпарса каять. "Эпле танлашăн ĕнтĕ санпа, хурçă чĕрнепе! Тытаяс çук çав эпĕ", – тенĕн çўлелле тинкерсе хўрине вылятать аялти, тусне чĕнсе ачашшăн йынăшать. Лешĕ нумай кĕттермест, чалт! сиксе анать те малалла çатăртаттарать.

Шартлама сивĕре Çумак пичче пахчари пĕчĕк пўртре çĕр каçать. Кăшт вутă хутсанах лĕп пулать вăл. Ырă кăмăллă хуçа Хĕлимуна та йыхравлать унта. Хĕрхенет ачаш чуна! Улпут пулса тăрать вара тулти хуралçă. Мăрмăр Пăрамун та чее: шăшисене шуйлантарса тяпписене шăнтса çўремест вăл çатăр сивĕре. Ăшă пўртре çемçе вырăн шыраса хуçипе юнашар йăпшăнса кĕрсе выртать, шăшисене тĕлĕкĕнче çеç хăвалать. Ытти чух иртĕхтермест сăтăрçăсене ĕçченскер. Кунсерен сунара çўресе кашнинчех тупăшпа таврăнать вăл. Ăна курах-и, тен, Хĕлимун та кичемленмест. Таçти шăтăка та кĕрсе тухса темĕн те пĕр тупать хура сăмса. Пĕрре хайхискер пĕчĕк çăм нуски хыпнă та пырать пахчара вĕтĕртеттерсе. Илес тесен çывăхне те ямасть, хăрлатса вăрçать, хўрине пăлтăртаттарса тарать.

– Вăт шеремет! Шăмă вырăнне нускипе мухтанасшăн, – ăшшăн кулать Çумак пичче. – Пăрамунран вĕренет-тĕр, тупата. Лешĕ шăши йăтса килнине час-часах курать вăл. Ара, нускийĕ шăпах шăши майлă-çке, хўри вырăнне çиппи те усăнса тăрать ав. "Эпĕ те пăшаллă сунарçăран кая мар тăрăшатăп", – тет ĕнтĕ мăнтăркка. Тепрехинче тĕлĕнтерчĕ те, савăнтарчĕ те тăрăшуçă.

Акă епле çаврăнчĕ ĕç-пуç... Пĕррехинче пĕчĕк мăнукĕ, шкул çулне çитсе пыраканскер, шкапри медале асăрхарĕ те кукашшĕне пĕртте канăç памарĕ. Хыçалтанах йăлăнса çўрерĕ килĕштернĕ "теттене" тытса курас килнипе. Мăнукĕсемшĕн темĕн те тума хатĕр-çке ватăсем! Хĕрхенчĕ шĕвĕрккене ветеран, чунне çывăх наградăна унăн кăкăрĕ çине çирĕплетрĕ. "Ан сухат тулĕк, юрать-и?– ачана куçĕнчен тинкерсе шĕвĕр пўрнине çĕклерĕ вăл. – Нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн, хастарлăхшăн тивĕçнĕ эпĕ ку хисепе. Лайăх вĕренсен ачасене те хавхалантараççĕ, медальпе чыслаççĕ, анчах "5"-пе çеç ĕлкĕрсе пымалла. Вăт, Раман-аптраман, хуртан та хăраман, шкула çўреме пуçласан çитĕнў пулĕ-ха сан. Турă сывлăх парсан, тен, эпĕ те тытса курăп санăн çутă медальне, э?" Хăпартланнă ача сăн-питĕнче йăл кулă çиçрĕ.

Вăхăт иртнĕçемĕн хайхи "Ĕç ветеранĕ" çухални паллă пулчĕ. Çемьепе темиçе хут шырасан та тупасси пулмарĕ ăна. Акă халĕ савăнăç.

...Каска çинче канса ларакан Çумак мучи пахчари сукмакпа Пăрамунпа Хĕлимун хăй патнелле мĕкĕлтетсе килнине курчĕ. Иккĕшĕ те темскер хыпнă иккен.

"Пĕрин шăши-ха, теприн мĕскер-ши? – йытта сăнакан ватă хăй куçне хăй ĕненмерĕ. – Нивушлĕ..." – теме ĕлкĕрчĕ çеç – тăватă ураллă тусĕ манăçми хаклă медале силлентерсе ун умне пырса ларчĕ...

**Альбина ИСЕМПИ**

## КАПКĂНКАÇМĂШ



**Н. КРАСНОВ (Йĕпреç районĕ) хатĕрленĕ**

**Сылтăмалла:** 2. Вăл пилĕк авсан тухать. 5. Чăпăркка. 8. Икĕ вĕçлĕ япала. 9. Пĕве пулли. 12. Кавир. 13. Республикăри район. 16. Пистолет. 17. Сӳпĕлти кайăк. 19. Килти хурт-кăпшанкă. 20. Хуралтă.

**Аялалла:** 1. Утă купи. 3. Йӳçĕ çырла. 4. Литература жанрĕ. 6. Тĕвесен ушкăнĕ. 7. Кăнтăрта ӳсекен йывăç. 10. Çĕр-шыв хӳтĕлевçи. 11. Вăл шахматра тĕл пулать. 14. Тинĕсри транспорт. 15. Лаша пушмакĕ. 18. Упăте апачĕ.

**Иртнĕ номерте пичетленнĕ капкăнкаçмăш хуравĕсем:**

**Сылтăмалла:** 4. Çарамас. 7. Шăна. 8. Авăн. 9. Ура. 11. Карап. 12. Раман. 13. Ака. 15. Тилĕ. 17. Крак. 18. Кĕленче.

**Аялалла:** 1. Лаша. 2. Чатăр. 3. Ката. 5. Мăкарич. 6. Сăмавар. 9. Упа. 10. Ара. 14. Кĕлет. 16. Ĕлĕк. 17. Кача.







**Сăмахсăрах.** Без слов.

Журналти ӳкерчĕксене www.cartoonbank.ru сайтран илнĕ

# Сăмахсăрах...














# Без слов...

**_О. ПОПОВ ӳкерчӗкӗсем_**

Ӳкерчӗксене www.cartoobank.ru сайтран илнӗ




– Ой, развеселил, друг, анекдотами.
Откуда берешь их?




– Я же регулярно выписываю журнал «Капкăн».

**ЖУРНАЛ ИНДЕКСĔ – 24608 ХАКĔ – 185 ТЕНКĔ ТЕ 04 ПУС**

Н. Никифоров ӳкерчĕкĕ

Хакĕ ирĕклĕ